Çу кунĕсем иртрĕç пулин те

# Тимлĕх пирки манас марччĕ

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче тыр-пул пухса кĕртес ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Вăрттăнлăх мар, çуллахи каникул кунĕсенче шкул ачисем те хуçалăхсене ку енĕпе сахал мар пулăшу пачĕç. Тыр алана, сортлана, типĕтнĕ çĕрте вĕсем аслисемпе пĕрлех тăрăшса ĕçлерĕç.

Халĕ вара çĕр улми пухса кĕртмелли тапхăр çитрĕ. Кунта каллех шкул ачисен пулăшăвĕсĕр май çук. Апла пулин те, ачасене ĕçе явăçтарнă чухне ятарлă правилăсемпе нормăсене пăхăнни кирлĕ. Кунта чи малтанах РФ Ĕç кодексне (265–271 ст.), 2.4.6. 664–97 санитарипе правилисемпе нормисене, 18 çула çитмен çамрăксене йывăр тата сиенлĕ ĕçсене явăçтарассипе РФ Правительстви 2000 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче йышăннă 163 № Правилăсене аса илес пулать.

РФ Ĕç кодексĕн 63 статйипе килĕшӳллĕн ĕç килĕшĕвне 16 çула çитнĕ çамрăксемпе тума юрать. 14 çула çитнĕ çамрăкпа ĕç килĕшĕвĕ тăвас пулсан ашшĕ е амăшĕ, опекăпа попечительство органĕ сывлăхшăн сиенлĕ мар çăмăл ĕçе пурнăçлама ирĕк пани кирлĕ.

18 çул тултарман çамрăксене çак ĕçсене явăçтарма юрамасть:

– йывăр ĕçсене тата сывлăхшăн сиенлĕ тата хăрушлăхпа çыхăннă условисемлĕ ĕçсене;

– нормăпа пăхнинчен ытларах йывăрăш çĕклессипе çыхăннă ĕçсене явăçтарма;

– каçхи вăхăтра, нормăпа пăхнинчен ытларах тата канмалли кунсенче ĕçлеттерме;

– ĕçе медицина тĕрĕслевĕсĕр йышăнма.

Алăпа груз сехетре 1 хутран ытларах йăтнă чухне вăл çак виçесенчен иртмелле мар (килогрампа):

| Яшсем, çулне кура | | | | Хĕрсем, çулне кура | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 14 ç. | 15 ç. | 16 ç. | 17 ç. | 14 ç. | 15 ç. | 16 ç. | 17 ç. |
| 6 кг | 7 кг | 11 кг | 13 кг | 3 кг | 4 кг | 5 кг | 6 кг |

Çак категорие кĕрекенсен ĕç нормине кĕскетнĕ ĕç кунне пăхса туса хатĕрленĕ. 16–18 çулсенчи çамрăксен вăл эрнере 36 сехетрен иртмелле мар. 14–16 çултисен вара эрнере 24 сехетрен ытла пулмалла мар.

Предприятисемпе организацисен ертӳçисен çул çитмен çамрăксене ĕçе явăçтарнă чухне çак нормăсене çирĕп пăхăнас пулать.

Çавна та каласа хăварасшăн. Ĕç сыхлавĕн пĕлĕвне сарни пысăк пĕлтерĕшлине шута илсе ĕç сыхлавĕ енĕпе предприятисемпе организацисем валли курссем ирттерме палăртнă. Ертӳçĕсемсĕр пуçне ку курссенче ĕç сыхлавĕн комиссийĕсен членĕсем, организацисен структура подразделенийĕсен ертӳçисем те хăйсен пĕлĕвне ӳстерĕç. Вĕренӳ тӳлевсĕр пулать, ăна социаллă страховани фончĕ шучĕпе йĕркелеççĕ, 40 сехет вĕренмелле. Занятисем район администрацийĕн çуртĕнче иртмелле, сентябрĕн виççĕмĕш вунă кунлăхĕнче пуçăнмалла.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 2-12-69; 2-14-57.

**А. КУЗЬМИН,**
**Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

«Условник» операци

# Преступленисене асăрхаттарас тĕллевпе

Судсем тĕрлĕрен преступленисем тунăшăн йышăнакан уголовнăй наказанисем икĕ тĕрлисем пулаççĕ: кусем вĕсем çынна обществăран уйăрассипе çыхăннисем тата обществăран уйăрассипе çыхăнманнисем. Обществăран уйăрнă преступниксем наказание колонисенче ирттереççĕ. Вĕсем тунă преступленисен йывăрăшне кура колонисенчи режим та тĕрлĕрен пулать. Çынна ку е вăл преступленишĕн обществăран уйăрма йышăнман пулсан вара вĕсем хăйсем пурăнакан вырăнтах наказание ирттереççĕ, панă наказание мĕнле пурнăçланине ятарлă учрежденисемпе органсем тĕрĕслесе тăраççĕ.

Ирĕкрен хăтарман çынсем наказание епле пурнăçланине Муркаш район территорийĕнче тĕрĕслесе тăракан патшалăх органĕ наказанисене пурнăçлаттарассин Федераллă службин Чăваш Республики тăрăх Муркаш районĕнчи 11-мĕш уголовнăй исполнительнăй инспекцийĕ пулса тăрать.

Çулленех инспекци Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствипе пĕрле республикăри пур районсенче те «Условник» оперативлă профилактика мероприятийĕсем ирттерет.

Унăн тĕп задачисем:

– судпа айăпланă çул çитмен çамрăксем хăйсем мĕнле тытнине, суд вĕсем çине хунă тивĕçсене вĕсем мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси;

– асăннă категорие кĕрекен çынсем преступленисем тăвассине асăрхаттарасси, преступленисем тума май паракан сăлтавсемпе условисене пĕтересси;

– учетра тăракансемпе профилактика мероприятийĕсем ирттересси;

– инспекципе шалти ĕçсен пайĕн подразделенийĕсем хушшинче информацисемпе хутшăнасси.

ЧР Шалти ĕçсен министерствин 2008 çулхи январĕн 23-мĕшĕнчи приказĕпе килĕшӳллĕн 2008 çулхи февраль тата май уйăхĕсенче «Условник» мероприятин икĕ тапхăрĕ иртрĕ. Август уйăхĕнче вара 1-мĕшĕнчен тăнса 10-мĕшĕччен асăннă мероприятин 3-мĕш тапхăрĕ пулчĕ. Унăн тĕллевĕ те çул çитменнисем хушшинче преступленисем тăвассине асăрхаттарасси пулчĕ.

Пирĕн районта уголовнăй исполнительнăй инспекци районти шалти ĕçсен пайĕпе пĕрле учетра тăракан çул çитмен çамрăксене тĕрĕслесе тăчĕ. Ирĕкрен хăтарман çул çитмен 4 çамрăк патĕнче пулнă, каçхине тата çĕрле – 2 хут. Условнăй наказани панă учетра тăракан 15 çул çитмен çамрăка тĕрĕсленĕ. Тупса палăртнă çитменлĕхсене кура суда тĕрĕслев вăхăтне тăсасси пирки 1 ĕç тата хушма тивĕçсем хурасси çинчен тепĕр ĕç тăратнă.

**А. ИВАНОВ,**
**наказанисене пурнăçлаттарассин Федераллă службин Чăваш Республики тăрăх Муркаш районĕнчи районсем хушшинчи 11-мĕш уголовнăй исполнительнăй инспекцийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Чечексем

Çуркунне çулла енне
те куçрĕ,
Ешереç çаплах-çке
чечексем.
Сар хĕвел те çӳлерех çеç
ухрĕ,
Кĕскелсех пыраççĕ
каçĕсем.

Сисĕнет, пĕр шелсĕр
те васкавлă
Улшăнать тавралăх кунсерен.
Чечексем те ешереç
ултавлă,
Çурхисем-и? Çук,
урăххисем.

Вăрлăх парнелес тесе
васкаççĕ,
Пит кĕске кун-çулĕ
чечексен...
Çамрăк ĕмĕр! Тек
танлаштараççĕ
Чечекпе, пĕлмесçĕ
çамрăксем.

Çуркунне – чечеклĕ çамрăк
вăхăт,
Куç хупса илмелĕх
çулĕсем.
Сар пике те хура
куçлă йĕкĕт –
Ыранхи шур çӳçлĕ
ватăсем.

Шыв юххи пек иртсе
кайнă вăхăт
Шавласа калле-çке
таврăнмасть.
Вăхăтра çемьеллĕ
пулнă йĕкĕт
Пурнăçра пĕччелĕхпе
ванмасть.

Сар пике те – пурнăçăн
чечекĕ
Пурнăç йĕркине асра
тытсан,
Пулĕ-çке чунра çемье
кĕтесĕ
Мăшăр урасем пĕрле
утсан.

Чăн телейлĕ, хисепре
пулмашкăн
Кашниех пултарĕ
ватăлсан.
Ачасем те пулĕç
савăнмашкăн
Чечекре чыса çухатмасан.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

Истори страницисем

# Уйкас Янасал чиркĕвĕ - 120 çулта



**(Вĕçĕ. Пуçл. иртнĕ номерте).**

Л. Браславский «Храмы, приходы и монастыри Чебоксарской и Чувашской епархии» ятлă кĕнекинче çапла çырнă: «Муркаш районĕнчи чиркӳсене регистрациленĕ: Тивĕшре – 1923 çулта, Тойкилтĕре – 1923 çулта, Турайра – 1923 çулта, Чемейре – 1924 çулта, Чуманкассинче – 1924 çулта, Йӳçкассинче – 1924 çулта».

Хăш-пĕр чиркӳсене 1928–1939 çулсенче хупнă. Юлашки çулсенче Очăкассинче, Турайра, Шатракассинче 1991 çулта чиркӳсене регистрациленĕ. Çавна май Уйкас Янасалти чиркĕве çав чиркӳ прихучĕсенчен килесси чакнă.

Чиркӳре тĕне кĕртнĕ, çамрăксем венчете тăнă, вилнисене кĕлĕ тунă, ял ачисене хутла вĕрентес енĕпе те нумай тăрăшнă.

Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш ялĕсенче 400 ытла чиркӳ пулнă. Вĕсенче пине яхăн çын шутланнă, чиркӳсен çумĕнчи прихут шкулĕсенче вара 822 учитель вĕрентнĕ. Çирĕммĕш ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенче чиркӳсене майĕпен аркатма-хупма тытăннă. Уйкас Янасал чиркĕвĕнчен клуб тунă, Шăмат, Муркаш чиркĕвĕсене çĕмĕрнĕ.

1941–1945 çулсенче чиркӳре всеобуч ирттернĕ. «Пулас салтаксене винтовкăран пеме вĕрентсе»,– тесе каласа паратчĕ ĕç ветеранĕ, Япони самурайĕсемпе çапăçнă Василий Ильин.

Вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăн ачасене тĕне кĕртме пачăшкăсем яла килетчĕç. Эпĕ астăвасса пĕрре пирĕн ялта тĕне кĕртрĕç. Тĕне кĕртме килнĕ пачăшкă мана Купăрляран Уйкас Янасала ячĕ. Вара эпĕ ăна валли лавккаран çиме чăх çăмартисем илсе килсе патăм.

Владимир, Мускав облаçĕсенче, çавăн пекех Чăваш Республикинчи Улатăр, Пăрачкав районĕсенчи вырăс ялĕсенче чиркӳсене тĕкĕнмен. Анчах пирĕн хăш-пĕр чăваш ялĕсенче, шел пулин те, авалхи истори палăкĕсем çук ĕнтĕ – аркатнă, çĕмĕрнĕ. Вĕсене çапах та ваттисем ас тăваççĕ, усăсăр пăснăшăн чунтан кулянаççĕ. Чиркӳсене çĕмĕрнĕ пулсан та, çынсем вĕсене ӳкерсе илнĕ. Çав çĕмĕрнĕ чиркӳсене аркатнăшăн Турра ĕненекенсем çеç мар, таврари пĕтĕм хула, ял халăхĕ кăмăлсăрланса пурăнать, вĕсен чун-чĕринче мĕнле те пулин çĕнĕ чиркӳ тăвас шухăш пĕтмен. Ĕмĕтленнине пур пĕрех тăвас тесе шутлать. Уйкас Янасалта та 1992 çулта ĕлĕкхи чиркĕве хута ярас тесе ĕçлеме тытăнчĕç. Чанне хăпартрĕç, халăх çӳреме пуçларĕ. Нумаях пулмасть чиркӳ çумне татах тепĕр çĕнĕ чиркӳ хĕресĕ хушăнчĕ. Пысăкланчĕ. Çулла йĕри-тавра чечексем ешерсе чиркĕве илемлетеççĕ. Çывăхри пĕве те çынсене савăнтарать.

Тепĕр пулăм çинчен те калас килет. 1875 çулхи ака уйăхĕн 7-мĕшĕнче Шăмат салинчи пачăшкă К. Магницкий профессорăн ашшĕнчен В.Н. Никольский мишавайран чул чиркӳ тума ял планне ыйтать пулас. Тепĕр уйăхранах Василий Никитич ыйтăва тивĕçтерет.

Чиркӳ службинче Уйкас Янасалта 37 çулхи Владимир Васильевич Громов ĕçленĕ. Вăл тĕн семинарине вĕренсе пĕтернĕ. 26 çулхи Семен Прокопьевич Огарков псаломщик тĕн училищине пĕтернĕскер тата чиркӳ старости Герасим Васильев штатра тăнă.

Священник çулталăкне 300, псаломщик 100 тенкĕ ĕç укçи илнĕ. Çулталăкне килрен пĕр пăт ыраш, çур пăт сĕлĕ памалла пулнă. Уйкас Янасалта 1885 çулта кăрлач уйăхĕн 19-мĕшĕнче, юн кун, прихут шкулне уçнă. Çав вăхăтра ялта 65 арçын, 68 хĕрарăм пурăннă. Чăвашсем хушшинче вырăссем те пулнă. Шкулăн хăйĕн çурт пулман, пĕр хресчен пӳртĕнче вĕрентнĕ. Класс пӳлĕмĕн тăршшĕ икĕ чалăш та икĕ аршăн, урлăшĕ икĕ чалăш та пĕр вершук, çӳллĕшĕ пĕр чалăш та 12 вершук пулнă. Ачасене каçхине выртса тăма уйрăм пӳлĕм уйăрса панă. Предметне В.В. Громов вĕрентнĕ. Тĕрлĕ вăхăтсенче учительте Трофим Захаров, Кирилл Громов ĕçленĕ. Шкулта пурĕ 26 ача вĕреннĕ. Вĕсенчен пĕри вырăс пулнă. Вĕренме Ваçкассинчен 2, Юрпашран 2, Исетерккĕрен 7, Раккашран 2, Кĕртекассинчен 2 ача çӳренĕ. Кайран ку шкула Хупахушкăнь, Анаткас Апаш ялĕсенчен те вĕренме çӳреме тытăннă.

1906 çулта шкула вĕрентме хĕрарăм учительницăна янă. Вăл чăвашла калаçма та пĕлмен. Ачасене букваре вырăс чĕлхипе вĕрентнĕ. Ачасем ăна ăнланман. Ашшĕ-амăшĕсем çавăн çинчен Н.В. Никольские Хусана çырса пĕлтернĕ. Хыççăн вара чăваш чĕлхине пĕлекен учителе уйăрса панă. Çав çулсенче Купăрляран Арсений Петров, Николай Арсентьев, Пантелеймон Дмитриев, Кĕртекассинчен Петр Григорьев т. ыт. те шкулта вĕреннĕ. Уйкас Янасал шкулне ун чухне Кĕртекасси, Тимкасси, Çĕн ял Çорт, Тукас, Уйкас, Юрпаш, Ваçкасси, Купăрля, Риккушкăнь ялĕсенчи ачасем те çӳренĕ. Çавăн пекех Хупахушкăнĕнчен, Карманкассинчен, Анаткас Апашран та.

Н.В. Никольский халăха çутта кăларас тесе Хусантан Библи, Евангели тата ытти Турă кĕнекисене Янасал тăрăхĕнчи ялсенче пурăнакансем валли илсе килнĕ. Сăмахран, Купăрляра пурăнакан Андриан Артемьев, Илья Лукин çав кĕнекесене ял халăхне валеçсе панă.

1870-мĕш çулсенче Купăрляра икĕ пускил хирĕçсе каяççĕ. Иккĕшĕ те тăшмансем пекех пĕр-пĕрне курайми пулнă. Дмитрий Никитич Юрмекей ку çынсене мирлештерме шутлать. Вăл хатĕрленет: Библи, Евангели тата ытти кĕнекесене вулать. Малтан пĕр пускилĕ патне – Сергей Антонов патне каять, кайран – Петр Алексеев патне. Малтан мĕнле тăшмансем пулнă, кайран мĕнле мирлешни, килĕштерни çинчен Библирен тата ытти кĕнекесенчен вуласа парать, ăнлантарать. Çапла вара икĕ пускил мирлешеççĕ. Халĕ те вĕсен мăнукĕсем Сергей Федотовичпа (1929 çулта çуралнă) Михаил Алексеевич (1929 çулта çуралнă) туслăн, килĕштерсе пурăнаççĕ, нихăçан та ятлаçмаççĕ.

Пĕррехинче Дмитрий Никитичпа арăмĕ Ксения Лукинична туя каяççĕ. Вĕсем пулипулми туйсене çӳремен. Ку туйра харкашса каяççĕ. Пĕри усал сăмах калать теприне. Дмитрий Никитич хăйĕн арăмне Ксения Лукиничнана калать: «Айта киле, кунта пирĕн пулма юрамасть»,– тет. Иккĕшĕ киле тухса каяççĕ. Кун çинчен 90 çул тултарнă Семен Тимофеевич каласа кăтартнăччĕ. Çак тĕслĕхпе ялти ачасене, пысăкраххисене те усал сăмах калама юраманнине вĕрентсе калатчĕ.

Тĕнчипе паллă математик Шупашкарти педагогика институтĕнче, ял хуçалăх институтĕнче студентсем умĕнче лекцисем вуланăччĕ. Эпĕ те ăна институтра вĕреннĕ чух итленĕ. Вăл Христос тĕнне шутсăр ĕненнĕ. «Çавăншăнах ăна физикăпа математика наукисен докторĕн ятне, профессор ятне паман»,– тетчĕ ЧАССР прокурорĕн пулăшаканĕ Петр Афанасьев. «Вăл Пасар урамĕнче пурăнатчĕ. Темле каласан та нумай хутлă кирпĕч çурта куçмарĕ. Христос тĕнне «хĕстернĕ» чухне вăл турăшсене пӳрт сакайĕнче шăтăк чавса унта усранă. Кайран, вăхăт иртсен, турăшсене пӳрте кĕртсе Турă кĕтессине вырнаçтарса лартрĕ»,– тетчĕ унăн мăшăрĕ 1995-мĕш çулсенче.

Çак Уйкас Янасал чиркĕвне тăвассишĕн тăрăшнă 1843 çулта çуралнă Василий Никитич Никольский христос тĕнĕ çинчен мĕнле шухăшлани çинчен кăшт каласа хăварасшăн. Вăл 1895 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче Купăрля ялĕнчен Хусана хăйĕн ывăлĕ – пулас профессор Николай Васильевич Никольский патне çакăн пек çырнă: «Пирĕн енчисем темшĕн-çке питĕ кая юлса хутла вĕренме пикенеççĕ. Халăхăн ытларах пайĕ авалхи тĕне тытнă. Киремете ĕненсе пурăннă. Киремете чӳк тунă. Пирĕн аттесем, аслă маçаксем те Киремете пуç çапакансем хушшинче пулнă. Çапах та Таса Христос çутта кăларни миссионерсем тăрăшнипе пирĕн яла та çитрĕ. Эпир те чиркĕве çӳреме пултартăмăр. Çӳлти таса сывлăш пулăшнипе чăн-чăн ĕненĕве алла илетпĕр, нихçан уйрăлми Троицăна пуç çапатпăр т. ыт. те.

Пирĕн тăрăхра Меркурий священник ятне илни сайра тĕл пулакан пулăм шутланнă. Хутла пĕлмен чăвашсен ывăлĕсен священник ятне илнĕ чăваш ячĕсем нумай халĕ. Анчах пирĕн яла хутла вĕренесси кая юлса çитрĕ. Вĕренӳрен пăрăннă пурте. Эпĕ вара чи малтан Шăмат прихучĕн училищине вĕренме кĕтĕм. Атте мана Шăмат училищине хăйĕн кăмăлне хирĕç тăрса вĕренме янă, çавăншăн кайран сахал мар кулянннă». Меркурий священник тесе хăйĕн ывăлĕ çинчен калать çырура.

1904 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче çырнă çырура Дьячкинăн «Вера, Надежда, Любовь» ятлă Турă кĕнекине 200 экземпляр халăх хушшинче сарни çинчен каланă.

**Н. ПАНТЕЛЕЙМОНОВ.**